Пётём тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБĔР 3 ТУНТИКУН 228(5041) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Небоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 6—67, ред. ăмĕстителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—5—85, йăлăхсăлăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йăлкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Профсойузсен ĕçне тата ытларах вăйлатар

Совет профсойузĕсен тĕп задачи профсойуз членĕсене коммунистсене воспитани парасси, вĕсене социализăмăлă тăван çĕршыв ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлекен, халăх тăшманĕсене хирĕç хăйаррăн кĕрешекен çынсем туса вĕрентсе ӳстересси пулать. Коммунисăм шкулĕ пулса тăракан Совет профсойузĕсем хăйсен членĕсене социализăмăлă ĕç дисциплинине çирĕп тытма вĕрентеççĕ, вĕсен производствăлă, политикăлă активлăхне организацилеççĕ тата çĕклеççĕ. Совет профсойузĕсем хăйсен нумай мĕлйунăлă членĕсене социализăмлă ăмăртăва, стахановла йухăма анлăн хутшăнтарса, ĕçтухăçлăхне тата пахалăхне йалан ӳстерсе пырассишĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн профсойузсем хăйсен членĕсен куçтуррăпа йăла условиссене лайăхлатас, вĕсемшĕн тăрăшас ĕнĕпе пысăк ĕçсем туса иртереççĕ.

Социализăмшăн кĕрешес ĕçре Совет профсойузĕсем вырăнĕ питĕ пысăк. Болъшевиксен парти тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ йĕртсе пынипе совет профсойузĕсен хăйсен членĕсене социализăм строительствин малашнехи çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетессишĕн, профсойуз членĕсен пурнăçне тата лайăхлатассишĕн, куçтурине ӳстерессишĕн кĕрешме организацилемелех.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш Пленум решенине пурнăçа кĕртсе, профсойузсем хăйсен ĕçне чылай лапăхлатрĕç. Профсойуз органăсем хăйсен членĕсемпе сыхăну тытассине авантлатрĕç, кулленхи ĕçе профсойуз активĕсене нумай хутшăнтарчĕç. Çакăн пекех социалла страховани ĕçĕ те, профсойуз членĕсене политикăлă воспитани парасси те нумай малала кайрĕ. Профсойузсен ĕçне лайăхлатассинче профорганăсенчи суйлавне иртерни, профорганăсенчи йĕртсе пырас ĕçе Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен партири тата партире мар болъшевиксем хутшăнни тĕп вырăнта тăрать. Суйлав вăхăтĕнче профсойуз членĕсем профорганăсенчен ĕçе йурăхсăр сынсене, троцкислă-бухăринла, буржуалă-национализла бандитсене, контрреволъюцилĕ тред-йунионисене тимĕр шăнăрпа шăйса тасатрĕç.

Анчах та профсойузсен ĕçĕнчи тĕп çитменлĕхе—профсойуз органĕсем хăйсен членĕсен массинчен уйăрăлса кайнине халĕ те тĕпĕрĕпех пĕтермен-ха. Çакна Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш Пленумĕ хăйĕн решенийĕнче хыттăн палăртса хăварчĕ. Халĕ те профсойуз организацисенче профсойуз демократине пăсникем, профсойуз членĕсен нушисем çине чиновникле-бюрократла пăхникем пур. Профсойузсем пурăнмăли çуртпĕр тăвас, столовăйсем, магазинсем ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшне пачах ĕçлеме пăрахни, массăлă контроль ĕçне начăрлатни, обкомсем, завкомсем, месткомсем хăйсен ĕçĕсем çинчен членсене отчотсем туса паманни—çаксем пурте профсойуз организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрăççĕ.

Çапла, Куславкка комбинатĕнчи рабочисем столовăйри, магазинри пысăк çитменлĕхсем çинчен завкома жалобă параççĕ. Завкома столовăй, магазин ĕçĕпе интереслеме шăтаççĕ. Анчах завком рабочисен шăтавĕ çине сăвăрăнса та пăхмасть. Профсойуз членĕсене хутшăнтарса магазин, столовăй, сутуилĕ организацин ĕçĕсене мĕншĕн тĕрĕслесе тухас мар? Мĕншĕн столовăй пуçлăхне, магазин пуçлăхне рабочисен пухăнăвне отчот тутарса, вĕсен ĕçĕсене критиклесе мар? Рабочисем шăтавне пурнăçа кĕртесси завкомăн ни хиçеплĕ ĕçе пулмать.

Профсойузсен рабочисем пурăнăн çуртăрсене лайăхлатас ĕнĕне ĕçлемелех, ачасен сачĕсене йăслесех ĕçĕсене тĕрĕслемелех. Çапла пулăн те пирĕн профорганăсем çак ĕçсенчен айкка тăрăççĕхех. Рабочисен-куçтуррăна йăла условиссене лайăхлатассишĕн тăрăшасси профсойузсен ни хиçеплĕ ĕçĕ пулăн те, нумай профсойуз организацисем çав ĕçсем çине тимĕр пăхăççĕ. Çĕмĕрлери комбинатра, Канашри вакуисем йăсакан савăтра рабочисем çăкăршăн черет тăни, магазинсенче чи кирлĕ таварсем: сахăр, махорка, кĕрпе çукки,—çаксем ĕнтĕ профорганизацисем рабочисен пурнăçĕ çине тимĕр пахиние кăтартса параççĕ.

Профсойуз организацисен сутуилĕ организацисен ĕçĕсене: магазинсен, ларăксен, буфетсен, столовăйсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăма профсойуз членĕсене ăшшăн хутшăнтарма. Вĕсенче тасалăх, йĕркелĕх тăвассишĕн тăрăшмала. Çĕнĕрен тунă çуртсенчи хватерсене тĕрĕс валеçнине, государства йăçăсем, садсем, пурăнмăли çуртăрсем тума пана укçа-тенкĕне мĕнле расхутланине тĕрĕслесе тăрасси те профсойузсен пысăк ĕçĕ пулать.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ рабочисен, служăщăшсен ĕçне сыхлас ĕçре техникăлă хăрушсăрлăх тăвас тĕлĕшпе профсойузсем сителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Предприятисенче вентиляцисем начăр ĕçлени, рабочисем ĕçлекен вырăнсене лайăх çутатмани ĕç вăхăтĕнче рабочисен сывлăхне качăлатать, чылай чухне сурăланасси патне те илсе пырать. Профсойуз организацисен работчисемпе служăщăшсен сывлăхне сыхлас, техникăлă хăрушсăрлăх тăвас тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле. Государствăпа савна валъăн пана укçа-тенкĕне хуçалăх организацисем мĕнле уса курнине профсойуз организацисен контроль тумала. Ĕç саккунне пăсна фактăсем çине тимĕр пăхассине пĕтермелех.

Профсойузсен производствăлă-массăлă ĕçне нумай лайăхлатмала. Халĕ нумай предприятисемпе учрежденисенче производствăлă канашлусем пулмаççĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкарти тир çăран савăтенче 1938 çула кĕнĕрен вара производствăлă канашлусем пурĕ те 3 хут çеç пулса иртнĕ. Производствăлă канашлусем ĕçе организацилесшĕне, браксене, простойсене пĕтермелех, продукци пахалăхне лайăхлатма, стахановла ĕç метăчĕсене сармалех, кайа йăлакан работниксене мала тухма пулăшмала. Производствăлă канашлусене лайăх организацилесе иртересси—профсойуз организацисен куллен, чĕререн йăпратса тумали ĕçĕ.

Социализăмлă ăмăртăва, стахановла йухăма организацилесе сарса пыракси, ударниксемпе стахановĕсен йышне ӳстересси—профсойузсен тĕп ĕçĕ. Куславкка комбинатĕнче, Улятăрти вăрман савăтĕсенче стахановĕсен йышне ӳсменни—профсойуз организацисем хăйсен хисеплĕ те чаплă ĕçне манни çинчен калămасть ни Парти Тĕпкомĕ: стахановла йухăман вăйă вăл массăлă пулăнче, тесе кăтартса паннине профсойуз организацисен йалан асра тытса ĕçлемелех.

Профсойуз ĕçĕнче ĕçлекенсене болъшевикла воспитани парасси халĕ те хĕсĕк вăрăн пулса тăрать. Профсойуз организацисен активĕ болъшевисăмпа хĕсăпаллантарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелех. Çак ĕçре ПСК(б)П историн Кĕске курсне вĕренесси тĕп вырăнта пулмала. Болъшевисăма вĕренмессĕр, йăна алла илмессĕр профсойуз членĕсен нумай мĕлйунăлă массине йĕртсе пыма çук.

Профсойуз организацисен умĕнче пысăк ĕçсем тăрассĕ. Профработниксен болъшевисăма вĕренмелех, массăна тачă сыхăну тытмала, вĕсен ыйтăвĕсене шăтăвĕсене пĕлмелех, профсойуз членĕсемшĕн тăрăшмала.

Совет профсойузĕсен Парти Тĕп Комитечĕн февралъ мартри тата йăнăварти Пленумĕсен решенисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелех. Профорганăсенчен тăшмала етемсене пĕр çын хăварничен тăпăлтарса пĕтермелех, тăшмансен сăтăрăн ĕçсен йулашкисене пĕтересситшĕн кĕрешĕпе пĕтĕм профсойуз членĕсен массине активлăн хутшăнтармалех.

Çак ĕçсене тăрăм-сăвăт комитечĕсемпе вырăнти комитетсен пĕтĕм хастарăйхна туса пымала. Членсен активлăхĕ çине тăвăнса, болъшевикла критикăпа самокритикана йалăн сарса ĕçлесен, профсойуз организацисем хăйсен ĕçне Ленин—Сталин парти хушнă пек тутăр, вĕсен ĕçĕсене критиклесе мар? Рабочисем шăтавне пурнăçа кĕртесси завкомăн ни хиçеплĕ ĕçе пулмать.

Профсойузсен рабочисем пурăнăн çуртăрсене лайăхлатас ĕнĕне ĕçлемелех, ачасен сачĕсене йăслесех ĕçĕсене тĕрĕслемелех. Çапла пулăн те пирĕн профорганăсем çак ĕçсенчен айкка тăрăççĕхех. Рабочисен-куçтуррăна йăла условиссене лайăхлатассишĕн тăрăшасси профсойузсен ни хиçеплĕ ĕçĕ пулăн те, нумай профсойуз организацисем çав ĕçсем çине тимĕр пăхăççĕ. Çĕмĕрлери комбинатра, Канашри вакуисем йăсакан савăтра рабочисем çăкăршăн черет

Чехословакири лару-тăру

Хеб районĕнчен çарсене илсе кайаççĕ. Прагăри демонстрацисем

Прагăран пĕлтерĕç тăрăх, ыран октябĕрĕн 1-мĕшĕ тенĕ чух çĕрле Кăнтăр Чехи районĕнчен —Мӳнхенри конференци решенийĕпе тăрăх Германи аллине куçмала тунă районсенчен (Австри чиккисемпе йунашар районсем) çар чăçĕсене, государствăпа пурăнăçсене тата граждăнла халăха унтан илсе кайма пуçланă. Ку ĕç самайах лăпкă пулса пырать. Хӳтлехсĕр тăрса йулакан çĕршер çемйесем Прагăна пырассе. Çавăн пекех Хеб районне те çарсенчен, халăхран тасатма пуçлана. Вăл район Судет облаçне кĕрет, унта Германи çарĕсене октябĕрĕн 3, 4, 5-мĕшсенче илсе пырассе.

Берлинран пĕлтернĕ тăрăх, октябĕрĕн 1-мĕшенче 14 сехетре Германи çарĕсем Гелфенбергпа (Австри ĕнчен) Финстерау хушшинче Чехословакăн чикки урлă каçнă тата Мӳнхенри килĕшӳре çентăбĕрĕн 29-мĕшенче палăртса унăн № 1 участкăна йышăнма пуçланă.

Çентăбĕрĕн 30-мĕшенче Прагăра куйĕпех массăлă демонстрацисем —Мӳнхенри конференци Чехословакине татăк-татăк туса вакласси çинчен йышăннă решенине хирĕç протеслекен демонстрацисем пулса иртнĕ. Пиншер çынсем хула урамĕсем тăрăх ишăн йалăвесем йăтса пынă. Вăцлов площăдĕнче темиçе пин çын пухăннă. Правительства территорийĕпе уступкăсем пама килĕшни çинчен пĕлтерсен, демонстрацине пухăнăсенчен нумайĕшĕ йĕрсе, çухăрсах макăрса йăнă.

Демонстрантсем: „Тĕп пуллăр капитулъантсем!", „Агрессăрсене пулăшакансене—Франципе Англине намăс та машкал!" текен лозунгсем çырса хунă плакатсем йăтса пынă.

Полици хулан тĕп урамĕсене хупăрласа пӳлсе тăнă, демонстрантсене президент резиденцийĕпе правительства учрежденийĕсем патне йăмасăр чарса тăнă.

Чехословакин премйер министрĕ генерал Сыровы радио тăрăх хыпăха чĕнсе сăмах каланă, ăна „хăйĕн хурлăхне, чун ыратнине çентерме тата çĕнĕ чикĕсемпе государствăн малашлăхне аванрах тума пулăшу пама" чĕнĕ.

Çар главнокомандуйушчийĕ генерал Крейчи приказ каларăма, çав приказра вăл çара „канăçла пулма, лайăх чăмăртанса пĕтĕççе тăма" чĕнет.

Чехословаки правительствин икĕ членĕ — портфельсĕр министрсем Зенкел (Прагă хули пуçлăхĕ) тата Буковский Чехословаки правительствин Мӳнхенри килĕшĕве йышăнине хирĕçлесе, отставкăна тухна. (ТАСС).

Агрессăрсемпе вĕсене пулăшакансен малашнехи планĕсем

Колонисене çĕнĕрен валеçесси çинчен Гитлĕрпа каласнă чух, Англи премйер-министрĕ Чемберлен ку ыйтăва татса парас ĕçе хăналанăçĕнчи державăсем хушшинче сывлăш пакчĕ тăвассипе çыхăнтарса йăлантарнă. Лондăнра: „Ку ĕçре парнесем памала пулса тăракан держава пĕртен-пĕр Британи империйĕ çеç пулма тивĕçлĕ мар: Франци, Бельги, Голланди тата Португали те ку проблемăна татса парас ĕçе хутшăнма тивĕç, кун хыççăн вара çавăн пекех Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Китай çинчен тăракан ыйтăва та йĕркелесе йăма пулать", тесе шутлаççĕ.

Франци пичĕçĕ çапла пĕлтерет: Вăтаçĕртри тинĕс проблеммине йĕркелесе йăрас шутпа çывăх вăхăтрах Англи, Италя тата Франци представительĕсен канашлăвĕ пулать.

Англин тинĕс министрĕ отставкăна тухнă

Англин тинĕс министрĕ Дафф Купер отставкăна тухнă. Чемберлен патне çырнă хăйĕн сырăвĕнче Купер: ăна отставкăна тухма хушнă сăлтав вăл—„Англин халăхĕ правительстви ĕçе кĕртсе пыракан тата малала ĕçе кĕртсе пырас тулашри политикăпе вăл пĕтĕмпех килĕшмесĕр тăнă" пулнине тӳрех калăнă.

Дафф Куперăн отставкине Чемберлен йышăннă.

(ТАСС).

Чехословаки правитĕлстви Полъшă уļтиматумне йышăннă

Çентăбĕрĕн 30-мĕшĕнче, çурçĕр тĕлĕнче çĕрле Полъшăн Прагăри посланникĕ Чехословаки правительствине уļтиматум панă, унта—Полъша правительстви Чехословаки Силезин тата Словакин чылай районĕсене Полъша аллине хăлех памалăн ыйтнă. Куна пĕрлех, Полъша пĕтĕм тĕрĕлĕн инкĕлне контроле ĕçлеме пуçланă.

Полъша хăйĕн аллине илес текен районсем Чехословакире. Пысăк индустрилĕ центрсем пулса тăраççĕ.

Йулашки пĕлтерӳсем тăрăх, Чехословаки правительстви Полъша уļтиматумне йышăннă. Районсен перремĕш ушкăнне (Тешин) евакуаци тума пуçланă.

Женевăри дипломатилĕ сынсен шухăшĕпе, Полъша Чехословакине уļтиматум тăратни вăл—Чехословаки государствине пĕтĕмпех пĕрсе лартма условиссем тăвас тĕлĕнне Гитлĕрăн малтанах шухăшланă тата вăл организацинленĕ провокацинĕ пулса тăрать.

Германи фашисĕсем туртса илнĕ Австри территорийĕнче, Словакине Чехословаки государствинчен уйăрас шутпа, кунта пурăвакан „словаксен йухăмне" организацилессе.

(ТАСС).

Чехословаки правитĕлствин саккунĕсем

ПРАГĂ, çентăбĕрĕн 30 мĕш (ТАСС). Çентăбĕрĕн 29 мĕшĕнче Чехословаки правитĕлстви чылай çĕнĕ постановленнесем пичетлесе каларăç. Сăмахран, пурне те тивĕç ĕç повиннăçĕ тăвасси çинчен постановлени пичетленĕ. Влаçăн вырăнти органĕсене тырпуля, çĕрулинпе хĕрлĕ кăшмана пуçтарма, çăвăн пекех йăлтăçалăхĕнчи кĕркуннехи ыйти ĕçсене тума та çамрăкшне-ваттине пăхмасăрах мобилизăци тума ирĕк панă. Тепĕр постановленипе — Чехословакири, çăвăн пекех йăт çĕршывсенчи пăлтăна тата хăклă хутсене йăт çĕршывсене кăларма чарнă. Кунпа пĕрлех тата вăрçă хăрушлăхĕ вăхăтĕнче чукунçăн транспортне йĕртсе пырас полномочисене çăран вĕрховнăй главнокомандуйушчине парасси çинчен те саккун кăларнă. Верховнăй главнокомандуйушчи чукунçăсемпе усă курасси, граждăнла турттарусене чакарасси, расписанисене ӳлăштарасси тата мт. çинчен распоряженисем кăларма пултарать.

Китайри вăрçă

Центр Китайра йулашки кунсенче Китай çарĕсем йăпăнăçсене пысăк сийенсем кӳнĕ. Цзйцзйянран кăнтăр-хĕвелăнăç йĕннерех йăпăнĕçсем китайĕçсемпе çăпăçса 5 пин çынна çити вилсе тата аманса пĕтнĕ.

Цзйцзйан—Наньчан линийĕ çинче йăпăнĕçсем 1 пин çынна йăхăн пĕтнĕ. Çăран пекех Нанькан районĕнче те Йапони çарĕсен пин çын ытла вилнĕ. Китайĕçсем 600 винтовка, 32 пулемет, нумай вăрçă хатĕрĕсем туртса илнĕ.

(ТАСС).

Лигă наци Совечĕн çеççийĕ хупăннă

Лигă наци Совечĕн çентăбĕрĕн 30-мĕшĕнчи ларăвĕнче Китай правительстви Лигăна чĕнсе калана йыту тăрăх тунă доклада пăхса тухнă. Докладра çакна палăртнă: Лигă пленумĕ иртнĕ çултах Йапонии Китайри вăрçă ĕçĕсене саккунсăр тесе йышăнчĕ. Докладра çакна кăтартса панă: Лигă уставĕн 16-мĕш статйинче пăхнă ĕçсене халăхи вăхăтри условиссенче ĕçе кĕртме пулать, Лигă членĕсем иртнĕ çулти пленумăн решенийĕсем тăрăх çеç мар, вĕсем тата 16-мĕш статйара пăхнă ĕçсене хăйсем тĕллĕн туса пыма пултараççĕ.

Китай делегачĕ Веллингтон Ку хăйĕн сăмахĕнче çапла калана: Лигă наци Совечĕ „халăхи вăхăтра 16-мĕш статйаран тухса тăракан обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Лигă членĕсен пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлеесине организацилеме пултарайман. Китай правительстви шанса тăрать: ситес вăхăтрах пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлессине тума пулать, унччен вара Лигă членĕсем 16-мĕш статйана хăйсем тĕллĕн пурнăçа кĕртсе пырĕç".

Англи, Франци, Швеци, Белъги тата Латви представительĕсем хăйсен сăмахĕсенче вĕсем хăйсен обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе нимĕн те тума шутламанни çинчен пĕлтернĕ.

Çакăн хыççăн Литвинăн йулташ сăмах тухса калана. Вăл:

„Епĕ Китай представительне çакна каласшăн: кунта тăратна доклад унăн килĕшӳле пулманнине епĕр те ăнланатăп, унпа пĕр шухăшлă пулатпăр. Çак доклад Китай Лигă наципен кĕтме пултарнине тивĕçлĕ мар пирки епĕ унпа килĕшетĕп. Кун пек докладсемпе агрессăрсене тытса чарма çук тата агрессине те чарма çук",—тенĕ.

„Манăн правительствă,—тесе каланă малала Литвинăв йулташ,—çак докладра каланăнчен нумайрах тума тата коллективлă ĕçсенче хутшăнса ĕçлеме" хатĕр пулнă пулĕччĕ, вăл ĕçсем Лигă наципе Китай умĕнче хăйĕн мĕнпур обязательствисене пурнăçа кĕртме май панă пулĕччĕç".

Йапонĕçсем çинна вĕлерекен газсемпе усă курнă йăту тĕлĕшпе Лигă Совечĕ „комитет 28" тенĕ çĕре кĕртнĕ государствăсене, Китайра официалла представительсем пур государствăсене ку ыйтăна сăнаса вĕремне хушнă.

Йулашкинчен Испани правительстви йăт ĕçершывсен" бойецĕсене республикă çарĕнчен каялла чĕнесе илессине тĕрĕслесе тăма пĕтĕм тĕнчери комиссине тавасси çинчен каларса тăратнă ыйтăвне пăхса тухнă. Ун пек комиссăн йăмала тунине тата вăл комиссăн составне Англи, Франци тата Иран представительĕсене кĕртнине Совет ырлана.

Çакăн хыççăн Лигă наци Совечĕн çеççийĕ хупăннă.

(ТАСС).

Заволжйĕри çеçен-хирсенчи пуйан пурнăç

Патша саманинче заволжйĕри хресченсен пурнăçĕ йăвăр пулна. Тырă ăнса пулнă çулсенче те тăраначчен сийенмен. Николайевскин Земски управăн агрономĕ пулнă Панфилăв 1912 çулта çапла çырнă:

„Кăçал тырăсем лайăх. Анчах та хресченсен государствăна тата кулаксене памали парăмсем питĕ те пысăк. Вăл парăмсене сапланă хыççăн нумайăшĕ хресченсен тырă çимелĕх те ăулмасть".

Панфилăв шутланă тăрăх, ĕлĕк Николайевски вулăсĕ пулнă йăлсенче продовольствия вăлъăн 179.226 пăт тырă çитмен. Ултă вулăсра пурĕ те 433 çĕйăлкă çеç пулнă, вĕсем те кулаксен кăна пулнă.

Халĕ Заволжйĕ йăлĕсенче пĕтĕмпех урăхла. Колхозри пурнăç кулленех пуйăнланса, куçтурланса пырать. Кăçалхи çул çеç Ивантеевка районĕнчи (Саратăв облаçĕ) колхозсем хуçалăх тата строительство материалĕсем 456 пин тенкĕлех илнĕ. 278 пин тенкĕлех йăлхуçалăх машинăсем илнĕ, вăл шутран 31 автомобиль.

Колхозсенче строительства ĕçе сарăлать. „Правда" колхозра выльăхсем вăлъăн темиçе вите, гараж-сем тата арман вăлъăн двигатăл илнĕ. „Заря" колхоз механизăмсем вăйĕпе ĕçлекен арман тата гараж тăвать.

„Октябĕрĕн 12-мĕш çулĕ" колхозра икçĕр çын вырнаçма пултаракан залăлă чаплă клуб туса лартнă.

Иртнĕ çулта районра ĕçкунĕ пуçне пĕр пăт ытла тырă валеçе пана пулнă. Кăçалхи çул Калинин йăчĕне тăракан колхозра тата хăшпĕр ытти колхозсенче аванс шучĕпе çеç ĕçкунĕ-пуçне 6-шар килограм тĕштырă уйăрса панă.

Çак çулти сакăр уйăх хушшинче районра колхозниксем 560 велосипед, 380 патефон, 650 касăе сехечĕ, 60 çĕвĕ машини туйаннă. Кооперацин колхозниксене икĕ мĕлйун тенкĕлех ытла мануфактурă, çĕленĕ туттăр, атă-пушмак, трикотаж, тăйăнса лармали пукансем, тимĕр кравачсем сутнă.

(ТАСС).

Колхозра пĕтĕм пӳртсене çĕнĕрен тунă

Калинин облаçĕнчи Нелидăвск районĕнчи „Правда" колхоза 7 çул каялла организацинленĕ. Çак вăхăт хушшинче колхозри пур çемйесем те хăйсен пӳрчĕсене çĕнĕрен, хулари пӳртсем пек туса лартнă: çулĕ, уйăрăм пулĕмсем. Кашни пӳртрех—лайăх сĕтел-пукансем, çĕвĕ машинĕ, патефон. Пур колхозниксем те хăçатсем, журналсем çы-

рăнса илеççĕ, вĕсен хăйсен библиотекисем пур.

67 çулхи Ильйа Андрейĕвич Деренков пурнăçĕн те лайăхрах çурт туса лартнă, унăн çемйинче пурĕ 11 çын. Пӳртĕнче 6 пӳлĕм, кухньă. Пӳрт йĕри-тавра çырла-улма сачĕ лартса тухнă.

(ТАСС).

„Родина" самолъот çинчен пĕлтерни

Октябĕрĕн 1-мĕшенче „Родина" самолъот ăстине тупаймăн. Ана халĕ те шыраççĕ-ха.

(ТАСС).

„Епĕр тăшмана çапла кĕтсе илетпĕр:

„Епĕр миршăн тăратпăр тата мир ĕçешĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йăпăнăсенчен хăрамастпăр, вăрçа чĕртсе йăраканнисем çапла çине çапиннех ответ пама хатĕр тăратпăр"

(И Сталин).

ĕлĕк те çĕмĕрнĕ, хăш те çĕмĕртетĕр, малала та çĕмĕртетĕр!

О. Куçникова Н. Дмитриĕв укçинчĕ („Пресслапш")

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П райком секретарĕсен канашлăвĕ

Октябĕрĕн 1-мĕшĕнче Шупашкарта райком секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура райĕствком председателĕсем те пулчĕç. Канашлу республикире хуçалăхлă ĕçсем мĕнле пынине пăхса. тухса, сăвка палăртрĕ: чылай районсенче аван çапас ĕç кайа йулса пырать. Ĕлпеç районĕнче аван çапас плана 47 процент, Çĕрпӳ—40 процент çеç тултарнă. Апашри колхозра (Шупашкар районĕ) аван çапнă çĕрте ик-виç çын çеç ĕçлет.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç те питĕ начар пырать. Пайăнхи куна кĕрхи çĕртме тăвас плана 20 процент кăна тултарнă. Уйрăм районсем чăтма çук йăпăх ĕçлеççĕ. Çĕртме тăвас плана Тăвай 6 процент, Çĕмĕрле — 7 процент, Çĕрпӳ 4 процент çеç пурнăçланă. Чылай МТС-сем, колхозсем ку паха ĕçе хакламаççĕ. Трактăрисене ĕçукçи тӳлемеççĕ, вĕсене социализмăлă ăмăртăва хутшăнтарман. Колхозсем лаша вăйĕпе çитĕлеклĕ усă курмаççĕ.

Хатĕрлев халăх комиссариачĕн уполномочĕнийĕ Митков йулташ пĕлтернĕ тăрăх, хăшпĕр районсем халĕ те госуслугăвана тыр тăратса çитермен. Натурплатă пăрас плана та 61 процент кăна тултарнă. Аш-какай планне 63 процент, сĕт-çу планне 62 процент, çăм хатĕрлес плана 83 процент кăна тултарнă. Канашлу хатĕрлев халăх комиссариачĕн уполномочĕнийĕ хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетменнине палăртрĕ. Вырăнсенче массăлă-янлантарулă ĕçе йĕркелемен.

Республикре финанс планне тултарас ĕç кайа йулса пырать. Сĕнтăвĕрĕн 20-мĕшĕ тĕлне финанс планне 66,8 процент кăна тултарнă. Ку ĕçре Çĕмĕрле, Йĕпреç, Канаш, Кувакка районĕсем республикăна кайăла тӳртса пыраççĕ: Çав вăхăтрăх Шăнкăртам 123 процент, Кувакинă 100 процент, Тăвай 101 процент тултарнă. Ку районсенче массăлă ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Канашлу Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçул строительстви ĕçене хытă интересленĕ. Чукунçул строительствине октябĕрĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле пулнă. Пайăнхи куна строительствă ĕçне пĕтĕмне те 65 процент кăна пурнăçланă. Вăл шутран çĕр ĕçне 96 процент, кĕперсĕм тăвас ĕçе 97 процент, пассажирсен çурчĕсене тăвассине 13 процент, электростанци тăвас ĕçе 22 процент, складсене тăвассине 11 процент пурнăçланă. Хăшпĕр ĕçсене тума та тытăнман. Ишлей станцинчи 32-мĕш №-лĕ çурта тата икĕ пурăнмали сурт туса пĕтермеле пулнă. Вĕсене халĕ тума тытăнман. „Материал çук, работниксем çук" теççĕ чукунçул строительствин управленинче ĕçлекенсем, анчах пур ĕç вăйĕпе те кирлĕ пек усă курмаççĕ. Çĕрпӳри сурт-сене тумăли материалсене Куславкка комбиначĕн хатĕрлемеле. Анчах ку материалсене вăхăтра хатĕрлес ĕçпе Куславкка комбиначĕ те, чукунçул строительствин началăникĕ те кирлĕ пек интересленмеççĕ.

Чукунçул строительствине ерухра туса пĕтерменнинн пĕр сăлтавĕ—ĕç вăйĕ ситменнинче. 49-мĕш километрта 500 çын, 76-мĕш километрта 100 çын ĕçлемеле. Кунта пĕтĕмпе 7 çын çеç ĕçлеççĕ. Çĕрпӳ станцине туна çĕрте штукатурсем, кăмака тăвакансем çитмеççĕ.

— Чылай районсем чукунçула пĕтĕм республикăн тумала" тенине манса кайнă. Вĕсем чукунçул строительствине ĕç вăйĕ тăратас тĕлĕшпе ĕçлеме пăрахнă. Шупашкар районĕнчен 530 çын ĕçлемеле, ĕçлекенсем 146 çын-çеç. Трак районĕнчен 166 çын, Ишлей районĕнчен 159 çын çеç ĕçлеççĕ. Строительствăра 18 çултан кĕçĕннисем пĕр тата 50 çултан иртнисем ĕçлеççĕ.

ПСК(б)П Обкомĕ йышăннă тăрăх, комсомол Обкомĕн чукунçул строительствине 1000 комсомолец памала пулнă. Пайăнхи куна 23 комсомолец кăна ĕçлет.

— Иккĕмĕш участкăна 1.700 рабочи тата 700 лаша парсан, епĕр 2-мĕш участкăри строительствă ĕçне 10 кун хушшинче туса пĕчĕрме сăмах пăраттăр,—терĕ Качанăв йулташ.

Артемьев йулташ тухса калать тăрăх, строительствăра рабочисен ĕç условисем начар, столовăйсем йăпăх ĕçлеççĕ, çăкăрпене тачка пĕçереççĕ, суту-илӳ ĕçне организацилемен.

Канашлу чукунçул строительстви ĕçне туса пĕтерессине хăвăртлатас тĕлĕшпе татăкăл решени йышăнчĕ. ПСК(б)П райкомĕсен пĕрлемĕш секретарĕсене, райĕствком председателĕсене 10 кун хушши йăтăрласа чукунçул строительстви ыйтăвĕсемпе ĕçлеме хушрĕ. Çак вăхăтра ПСК(б)П райком секретарĕсен чукунçул строительстви кайса, партилĕ-политикăла ĕçе вăйлатма йама пулăшмала.

Комсомолĕцсен вĕренĕвĕ

Çĕрпӳри фельдшĕрсен шкулĕнчи комсомол организацийĕнче комсомол пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсемпе комсоргсен суйлавне иртересси ĕçченсен ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ йышăнăнă постановлениене сӳтсе-явăрĕç. Тата каши группăрах комсомолĕцсем суйлава иртермели инструкцине тĕплен паллашаççĕ. Суйлава хатĕрленĕ май шкулта политикăлă агитацине анлăн сарса пыраççĕ.

Политкружоксене йĕркелĕн ĕçлеме пуçларĕç. Шкулта политпрамăтăна вĕренме тăвата кружок, партине историне вĕренме тăвата кружок йĕркеленĕ. Парти историне вĕренмели кружокенче 86 комсомолĕц вĕренмеле. Кружоксене ПСÇЛКС райкомĕ уйăрса пама пропагандиссем йĕртсе пыраççĕ. Уйрăмăнах Çĕргейĕв Йăкăв комунизм йĕртсе пыракан кружок йĕркелĕ ĕçлет. Вăл урока тĕплĕн хатĕрленсе пырать, кĕске конспект çырать, çĕнĕ хăвăртсене, илемлĕ литературăна усă курать. Политкружокенче вĕренме сойузра тăман студентсене те йăвăрташă.

К. Михайлăв.



„Куйбышевуголь" трестри Каганович йăчĕне тăракан шахтăн парткабинетĕнче (Сталино, Донбасс).

УКЕРЧЕК ÇИННЕ: Шахтăри комсомолĕц-агитаторсем (сылтăмран сулахайăлла) М. П. Ковалев, Н. А. Секретарук тата А. И. Степаненко йулташсем халăх хушшинче заыатлисем пĕтĕрме хатĕрленеççĕ.

Б. Виньямс фото-укерчĕкĕ (Сойузфото).

Партилĕ-политикăлă ĕçсене вăйлатмала

ПАТĂРЬЕЛ. („Чăваш Коммунĕ" корр.). Районра май уйăхĕнчен вара парти членне куçма тата парти кандидатне кĕме 31 çын заявлени пана, вĕсенчен кандидата 10 çын илнĕ, парти членне 3 çынна куçарнă. Районри çутĕç тата çĕрĕç пайĕсем çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем 5—6 çынна пертине илме хатĕрленĕ, анчах ку ĕçе тĕплĕн туса пыман пиркийĕсем ĕç вăрăма тăсăлса кайнă. Сăкăтри тата Çĕрпӳленчи парторганизацисенче пĕрер заявлени кăна пулнă. Верховнăй Советсен суйлавĕнчи активист, агитатăр, учитĕл Акчурин заявленийĕ, ăна рекомендацисем тупма пулăшман пиркийĕсем, Çĕрпӳел организацийĕнче темиçе уйăх хушши выртăç. Партине çĕнĕрен илнисемпе ĕçлессине организацилемен, вĕсене ĕçе йăвăçтарман, сочувствуйушисемпе ĕлемеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацисем ĕç планĕсене пурте хатĕрлемен, пухусене иртерме начар хатĕрленеççĕ (районри сутĕç тата çĕрĕç пайĕсем сумĕнчи организацисем), пухусем хăй те кирлĕ активлăхпа иртмеççĕ.

Парти вĕренĕвĕ иĕлӳ—август уйăхĕсенче пулман. Халĕ парти райкомĕ ку ĕçе хускатса йăна кирлĕ ĕçсене туса иртерĕç, анчах хускану сахал-ха. Çака вăл парти райкомĕ хăйĕн йăланăхи ĕçпе сахал ĕçленинчен, решенисем мĕнле ĕçе кĕрсе пынине тĕрĕслеменрен килнĕ. Парти райкомĕ 1938 çулта парти вĕренĕвĕ ыйтăвнеултă хутчен „сӳтсе-явăма" кăна ĕлкĕрни вăл ситĕлеккĕр.

Районра политикăлă агитацин ĕçне вăйсăрлатнă. Политикăлă агитаци ĕçĕ, партилĕ-массăлă тата партин шалти ĕçĕ районри организацире ситĕлеккĕр пулса пырать пулсан, районра хуçалăхла ĕçсем нумай йĕнпе начар пулса пынинчен нимĕн те тĕлĕнмели çук.

Ник. Пушкин.

Илнĕ обйазатĕлствăсене пурнăçа кĕртетпĕр

Тури Пӳртлĕри (Турхан районĕ) „Ударный" колхоз сумĕнчи пуçламĕш организацийĕнче комсомолĕцсем комсомол 20 çул тултарнă уйăна хатĕрленĕ май илнĕ обйазатĕлствăсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вĕсем колхозра лайăх пример кăтартса ĕçлеççĕ.

Комсомолĕц Унтин Семен Асăл Арапуçĕнче вăтам цикулта „отличнo" вĕренет. Çавăн пекех комсомолĕц призывник Унтин Йегор та кăçал тырăсене пухса кĕртес ĕçре тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл ыраш акнă чухне пĕр кун сиктермесĕр ĕçлесе, хăйĕн ĕç нормине 150—175 процент тултарса пычĕ. Кăçал трахоман сывалса хăпăр хамăран йăуратнă Совет Сойузĕн чикине сыхлама кайма йăрăхлă пулчĕ.

Иван Лапшин.

Комсомол йышĕ ӳсет

Вăрман Йĕнешпи (Шăхасан р.) „Ирĕклĕх" колхоз сумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕнче çамрăксем хушшинче лайăх ĕçлет. Комсомол организацийĕнче ку таранччен 21 комсомолĕц пулнă. Организацин лайăх ĕçленине пуля çак кунсенче комсомол ретне çĕнĕрен 7 çамрăк кĕчĕç. Йалти çамрăксен чен комсомола кĕме хатĕрленекенсем татах та пур.

Комсомолĕцсем 1939 çулхи ăнăр уйăхĕнче пулăкан перепиç çинчен сӳтсе-явăрĕç. Вĕсем тата ситĕннисем хушшинче хут пĕлменлĕхе пĕтерес ĕлпеç ĕçлеççĕ.

И. Бычков.

Пирĕн хулăсемпе район центрĕсем

Йетĕрне икĕ тапхăрта

1917 çулччен ку хула—мещенсен хули пулнă. Нимĕнле илемлĕх те пулман кунта. Хулăра 4 чиркӳ пулнă. Вăл чиркӳсене 5 поп, 3 дийакăн, 3 псаломщик ĕçлеснисси пуçĕсене тĕн сĕрмĕне антрата пурăнна. Чиркӳсенчен инçе мар Таланчĕк, Ашмарин, Мордвин купеçсен чул çуртĕсем ларнă. Пĕтĕм хулинче 22 купеç шутланнă. Хула сывăхĕнчи çĕр çурри ытла помещиксен аллинче пулнă. Таланчĕк помещик—купеç, вăлах савăт-хуçи, Йетĕрне хулинне хăй аллинче тытнă. Уйăса кĕрекен йăлсенчи хреченсене те вăл хăйне пăхăнтарса тăнă. Хулă халăхĕне йăл халăхне хĕсĕрленĕ, ним айăпсăр хĕненĕ, тарăхтарнă. Çакăн пекех кунта вăрман промышленникĕсем те пурăннă. Бурашниксăр вăрман промышленникĕ—уйĕсри вăрмансен хуçи пулнă.

* * *

Октябĕрти Асăл революцин хыççăн пирĕн çĕршывра телейлĕ те савăнăслă пурнăç пуçланчĕ. Йетĕрне хули те таланчĕсемпе ашшисенченех, ĕççыннисен йăуне ĕçне тата ытти сĕлĕхсенчен, пуçламне помещиксенченех, вăрман промышленникĕсенчен тасалса, уçă сывлăппа сывларĕ. Хула çĕнелсе урăхланчĕ. Ĕççыннисен пуçне тĕн сĕрмĕне антратакан чиркӳсем выраннe, çĕнĕрен шкулсем, куçтурăлă çуртсем туса лартрĕç. Чиркӳ выранне çĕнĕрен тунă виçĕ хутлă çуртра — профтехникă шкулĕнче тăвăттăмĕш çул ĕнтĕ социализмăлă çĕршывăн телейлĕ ачисем техникăна вĕренеççĕ. Тепĕр чиркӳ çуртĕнче ҫулари ĕççыннисем вăлăн электростанци тунă. Халĕ тата хупнă тепĕр чиркĕве сӳтсе, куççăрсене вĕрентме икĕ хутлă шкул тăваççĕ.

Хулара кинотеатр пур. Кунта 1936 çултанпа каласакан кино-картинăсем кăтартаççĕ. Халăх куçтурăлăхĕ-куллен кун ӳсет. Самрăксем пурте шкулсенче вĕренеççĕ. 1926 çулта хулара хут пĕлмен çынсем 2173 шутланнă пулсан, халĕ пурте хут пĕлеççĕ.

Октябĕр революцинчен ку хулара реваньăй училищăпа тата хĕрарăмсен гимназийĕнче çеç пулнă. Вăл шкулсенче пуçлемпе куласкан, уçламçăсен ачисем вĕреннĕ. Халĕ кунта пуçламĕш шкулсем 2, тулăнмар вăтам, вăтам, çитĕннисен вăтам шкулĕ, йăлхуçалăх техникумĕ, педагогикă училищи пур. Ку шкулсенче 72 учитĕл, вĕренекенсен йышĕ 1600 çынран та иртет. Шкулсенче ĕççыннисен ачисем вĕреннеççĕ. Вĕсем агрономсем, учитĕлсем, техниксем пулса тухаççĕ.

Асăннă шкулсемсĕр пуçне, кунта районри колхоз шкулĕ те пур. Колхоз шкулĕ çулсеренех район валăн тĕрĕлренех йăлхуçалăх специалисĕсене вĕрентсе хатĕрлет. Кăçал выльăх-чĕрлĕхсене пăхакан специалиссем 17, бригадирсем 22 тата ытти сем те вĕренсе тухнă. Халĕ ку шкулра 32 çын вĕренеççĕ.

Хулари ĕççыннисем ĕç хыççăн кино курнисĕр пуçне, клубсеме библиотекăсене çӳресе хаçат-журналсем вулаççĕ, хăйсен пĕлĕвне ӳстереççĕ. Хула библиотекинче халĕ 26 пин ытла тĕрĕлрен кĕнекесем пур. Вулакансен йышĕ ӳсех пырать. Иртнĕ çулра хула библиотекинчен 2 пин çын тĕрĕлрен кĕнекесем илсе вулана пулсан, кăçал октябĕрĕн 1-мĕшне 4419 çын вулана. Ку хисеп ĕнтĕ хулари ĕçлушшисен куçтурăлăхĕ ӳснине кăтартать.

Сăр шывĕн çыранĕ хĕрринче мунча, сат, столовăй пур. Стадионран инçе мар магазинсем, столовăй, ресторан. Сăр шывĕн сылтăм ĕнче ҫу çапакан тата спирт саваçĕсем.

Хулана халĕ 1594 экземплăр хаçат-журналсем килеççĕ. 461 киле радио кĕртнĕ.

Хула халăхĕ телейлĕ пурнăç туса пана Сталин çинчен, сыхлăх çинчен, тăван çĕршыв çинчен çырнă йăрăсене йăуллать.

Халĕ хулари „ПСК(б)П Партин 17-мĕш сйесйĕ" колхозăн бригадинсем йăлхуçалăх ĕçĕсене пысăк йăнăслăхпа вĕçлеççĕ. Колхоз çĕрулми кăларса пĕтерет. Колхоз хĕрĕсемпе каччисем телейлĕ пурнăç йăррисене шăрантараççĕ. Хĕрсемпе тата каччăсемпе пĕрлех ватă карчăксемпе стариксем те ĕçре савăнаççĕ:

„Широка страна моя родная,
Много в ней лесов, полей и рек"...

тенĕ йăрă сасси ир пуçласа кăçченех хула çинче йăнăтаса тăрать.

„ПСК(б)П Партин 17-мĕш сйесйĕ" колхоз куллен кунах вăйăлланать. Колхоз йăтăлă выльăх-чĕрлĕхсем усрать. Хирте те суха пуçне, йăваç çӳресемпе ĕçлемеççĕ. Вĕсем выранне колхозăн асăл хирĕнче хурçа трактăрсемпе, комбайнсемпа ĕçлеççĕ.

Колхозниксем, рабочисем, служăжничсем пуйăн та куçтурăлă пурăнаççĕ. Вĕсем патефонсем, велосипедсем, гармăшсем т. ыт. те туйăнаççĕ.

Халăхăн пурнăçĕ йăла условийĕсем лайăхланнă май, хулари халăх йышĕ те ӳсет. 1926 çулта хулара 3.524 çын пулнă пулсан, 1938 çулхи йăнварĕн 1-мĕшне 4.681 çынна ситнĕ.

Н. Цветков.

Каран йалĕнче

Ĕлĕк, Октябĕрти Социализмăлă Асăл революцинчен, Каран йалĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) хресченсенчен чылайăшĕ хура пӳртсенче пурăннă. Халĕ, колхоза кĕрсе, вĕсем пуйăн та куçтурăлă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Кăçал 9 колхозник çĕнĕ пӳртсем лартрĕç. Пӳртсем пысăк та çутă. Колхозниксем патефонсем, фотоаппаратсем, велосипедсем туйăнаççĕ. 20 колхозник çĕнĕ машине илнĕ.

Йалта куçтурăлă учрежденисем—пионер касси, шкул, вулав çурчĕ пур. Ситес çул „Хастар" колхоз клуб лартма шутлать. Тырпулсене пуçтарса кĕнĕ хыççăн, çамрăксем савăнăçла вечĕрсем туса иртереççĕ.

К. Орудин.

С. Алекçейĕв

Италипе Абиссини хушшинчи вăрçă пуçланни виçĕ çул çитрĕ

1935 çулти октябĕрĕн 3-мĕшĕнче фашисла Италин çарĕсем çурçĕр ĕнче Абиссини чиккипе урлă каçса, Абиссини халăхне хирĕç вăрçă пуçларĕç.

Ку ирсĕр вăрçăна Италин фашисчĕ 1935 çулти кĕркунне тăхçан малтанах хатĕрленнĕ. Октябĕр уйăхĕ тĕлне Абиссини кĕмĕлĕ вырăнсене 300 пинлĕ çар илсе пынă пулнă.

Абиссинири вăрçа 7 уйăх хушши тăсăлнă. Паттăр çапăçнă Абиссини çарĕ фашисла захватчиксене чылайăх сисĕнмеле çаннă. Çар техники ĕнĕпе кайа йулнă пулин те Абиссини Италин çарĕсене парăннан. Фашисла тискерлĕйĕкĕн иркĕçĕрех Вăтаçĕрти тинĕс урлă урса кайсах çĕнĕрен те çĕнĕ çарсем кăсарлата пулнă. 1936 çулти çуркунне тĕлнех Абиссинири фронтсенче 23 дивизи—пĕр мĕлйăуна яхăн çын, вĕсенчен 40 пин офицерсемпе унтер-офицерсем пулнă. Абиссинине вăрçма 450 пин винтовкăпа карабин, 800 пушă, 300 танк, 400 самолет, 13.500 грузовик, 80 пин ашак тата 1800 рации кирлĕ пулнă. Хĕвелтухăç Африкăна 2 мĕлйăн та 500 пин тонна груз илсе пынă, ăна илсе пыма 55 пин вакунăй 7 пин те 500 пуйăс тата 460 пăрахут рейсĕ кирлĕ пулнă.

Фашисла çăлăсем хăйсен хисеп-кел кулписем, чул кулписем, Абиссини салтакĕсене, вĕсен врăмĕсемпе ачийĕсене тата ăчисене вĕлерĕ-вĕлерĕ хăварнă. Ирпит тултарнă бомбăсем йунăл та çăтăкăн Италин çарĕсен çулĕ çинчи мĕн пур чĕрчунсене вĕлернĕ.

1936 çулти майăн 5-мĕшĕнче Италин çарĕсем Аддис-Абебăна пырса кĕнĕ. Пĕтĕм хулана çаратнă, унăн центрне вут тĕртнĕ. Уччен темиçе кун малтан Абиссини кетусĕ тата унăн чылай çар началăникĕсем малала çапăçма килĕмесĕр Абиссинирен тухса тарнă.

Çавна май Италин „Гадзетта дель пополо" йăтлă хаçачĕ çакăн пек çырнă:

„Вăрçă пĕтрĕ; Насйбу çарĕн тата ытти çарсен йулашкийĕсем хирĕç тăнисене пусармалăн операцисем пулма пултарĕç, анчах вăрçа Абиссинире вăрçăна çĕнĕрен пуçарма май çук, ун вырăнне вăрçа на Африкăран Йевропăна куçарма май пур".

Фашисла вăрă-хурăхсем хăйсен малтанах каласа хунин пĕрмеллĕ пайĕнче пит те хытă йăнăшрĕç—пĕтмен Абиссини хăйĕн паттăрла кĕрешӳне пăхăн кун та паттăрăн малала тăсать,—апла пулсан никĕмлĕш пайĕнче те вĕсем хăйсен ирсĕр шухăшне çитĕклеклĕ уçăн калаçа пама пултараймаççĕ.

Италин фашисчĕ Германипе пĕрле Испанире интервенци пуçларĕç.

Халĕ, Италин фашисчĕ Балеар утравĕсенче хуçалăнна вăхăтра, Вăтаçĕр тинĕсĕре Италин вăрçă базинсем пĕрин хыççăн тепĕр пулса ларaççĕ, Италин Палестинăра тата Араб государствисенче харкашусем туса пырат пулсан—Муссолини Абиссинире авантӳра туни Италин Вăтаçĕр тинĕсĕре хуçалансине, Африкă колоницене кĕмĕли вырăнсене çирĕплетессишĕн пыракан кĕрешӳ пуçламĕшĕ çеç пулни пит те уçăн курăнса тăрат.

Абиссинири вăрçă халĕ Гитлĕрпа Муссолини Испани хирĕсенче тăвакан „пысăк вăрçăн" пуçламĕшĕ çеç пулнă. Вăтаçĕр тинĕс тата сурçĕр-хĕвелтухăç Африка — ака Италин империалисчĕн вăрçса илмели программи.

Италин Абиссинине çĕмĕрсе кĕрессине Англин чăрмантарма пуçламайсем те пулнă. Анчах Англин империалисĕсем Муссолини сăмахĕ хыççăн кайнă, çавăнпа Муссолини çав çаратуллă вăрçăра Англи чăрмантармасăр, тесе шанчăклансах вăрçма пуçланă.

Англи империалисĕмĕ Абиссини халăхĕ çĕнтермелеме мар тăвассăн пулнан. Вăл çĕнтерӳ Африкăн континентĕнче Британи колоницисенчен Угандӑран, Кенийĕн, Сурçĕр тата Кăнтăр Родезийĕн „халăхне хăйсен çарĕсене хăварнă. Ăна Англи правительстви çав агрессорсемпе килĕшес политикăна халĕ те тытса пырат. Вăл политикă хăйĕн çимĕçĕпе пират: агрессорсем куллен кунах çĕмĕрленсе пыраççĕ.

Абиссини вăрçи Италин халăхне мĕн пачĕ? Вăл экономикăлă ларăтăрна начарлатрĕ, ĕçсĕрлĕх ӳстерчĕ, ĕçсыннисем йăпăлаçем тумăнса çул курнине чакарчĕ, ун кирлĕ йăпăлаçсен хакне ӳстерчĕ.

Официаллă сведенисем тăрăх 1936 çулти май уйăхĕ тĕлне Италин Абиссинире авантӳра тума 750 мĕлйăн доллăр укçа тăкаклăнă. Çав тăкаксене витме 1936 тата 1937 çулсенче налогсене ӳстернĕ. 1938 çулта вĕсене татах ӳстернĕ. Абиссини халăхне пусарма Абиссинире 200 пин çынлă çар тытаççĕ, вăл Испанири вăрçă валăн тăкаксене пĕрле хыснана çаратса хăварнă тата Италин халăхне чăтма çук йăвăрлăха кĕртсе ӳкернĕ. Муссолинин виçĕ çулхи вăрăхурахла политики ахаль чухнехи государствăн бюджетĕнчен ытлашши 41 мĕлйард лирă укçа çăтса йанă. Италин ытлăн запасĕ ирханласа ситнĕ. Çĕршыв кăмăл, тимĕр, çĕрмăмăк т. ыт. те нумай ситменнине анлăрат. Тырпул пуламанни çĕршывăн йăвăрлăха пысăкăн ӳстерет, çав майпа кăçал Италин йăут çĕршывсенчен 30 мĕлйун квинталран кайа мар тырă илмеле.

Абиссинине çĕнтермен. Абиссини халăхĕ фашисла захватчиксене хирĕç хаç те кĕрешет. Испанине Франци территорийĕ чухăл, 13—15 мĕлйун çынлă çĕршывра нумай мар çĕртăл çудсемне сукмаксем тăрăх тăрса тухнă Италин çарĕн отрăчĕсем „контроль туса тăраççĕ". Италйăнĕсен аллинчи вырăн вăл—çудсем тăрăхĕнчи ансăкрен çеç. Аякра выртакан вырăнсем пурте (вăл территори çĕршывăн виçĕ пилĕкĕмĕш пайĕ пулат) гĕрĕссине италйăнĕсене пăхăнмаççĕ.

Абиссинире партизанла йухăм сарăлсах пырат. Италйăнĕсен ушкăнĕсем çапăçусенче пулнă сухатăвĕсем 2—3 пин çынна ситеççĕ. Вырăнти халăх çарне тума тăнăçăр йăпăлăр пулнă. Абиссинăнĕсем ку çара тытăпăрсене хĕçпăлăсем илес тесе çеç кайнă, унтан вăл çартан хăйсен партизан отрăначĕсене тарнă.

Абиссини салтакĕсем пăлханнусем туса Италин официрĕсене вĕлернисем те нумай пулнă. Ун хыççăн вĕсем взвочĕ-взвочĕне партизансем патне кайнă.

Нйю-Йоркри „Сандэй уоркер" йăтлă хаçат нумай пулмасăр хăйĕн корреспонденчĕсене пана сведенисем тăрăх çапла çырнă: „Ситес кĕркунне те италйăнĕсемшĕн савăнмалийĕх пулмасăр. Абиссинире çĕнтăвĕр уйăхĕнче тропикăлă çăмăрсем çăнăхан вăхăт пуçланат. Çулсем çӳремеле мар пулаççĕ. Самолетсем вĕсене улăхма пултараймаççĕ. Италин гарнизонĕсене пĕтмели хăрушăлăх пулат. Пысăк центрсем çине те татти-сыпписĕр атакăсем тăваççĕ".

Çăмăрсем пуçланиччен те çапăçусем чарăнман. Аддис-Абебăна Джибутине (Франци Сомалийĕ) сыхăнтаракан чукунçула партизансем аллинче. Абиссини салтакĕсем Аддис-Абебăран айăкрах мар сăртсем хӳттинче тăраççĕ. Абиссинăнĕсем Италин самолетĕсене йăнăлăн персе антараççĕ, горучи склачĕсене çунтарса йăраççĕ. Чылай çĕрте италйăнĕсен самолетĕсеме грузовиксем валăн горучи йулман. Моджоза Хадамăна атакăланă абиссинăнĕсене хирĕç италйăнĕсем Аддис-Абебăран çарсем йама пултарайман.

Лондонри „Дейли геральд" йăтлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăр хĕвеланăç Абиссинире 50 пине яхăн çынла Абиссини çарĕсем çапăçаççĕ. Италин вăл çарсене хирĕç тăма пултараймаçт. Абиссинăнĕсем пĕр çĕре пухăнакан вырăнсене йăваркан Италин çар чăçĕсем тĕппех саланаççĕ. Ограден провинцинче çавнашкалах хăйăр çапăçусем пыраççĕ. Абиссинăнĕсем çапăçни вăхăт-вăхăтăнне Огаденпа кӳршĕри Италин Сомали хушшинчи çыхăнăва татас хăрушăлăх кăларса тăратат. Италин чĕрĕ тавăрăн хаклă çăлкуçĕ тесе шутланни çĕршыв Италин халиччен те начар пулнă бюджечĕмĕн йăвăрлăх çеç кӳчĕ" —тесе çырат „Дейли геральд" хаçат.

